Вĕренӳ çулĕ вĕçленет

Пĕрлехи патшалăх экзаменĕсенче çĕнĕлĕхсем пур

Шкулсенче 11-мĕш тата 9-мĕш классенче вĕренекенсен хĕрӳ тапхăр пырать. Патшалăх экзаменĕсене тытассиччен вăхăт сахал юлчĕ. Ку çул çак тĕрĕслев йĕркинче çĕнĕлĕхсем пур. Çакăн пирки каласа пама район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалистне З.Ю.ДИПЛОМАТОВА-НА ыйтрăм:

– 9-мĕш тата 11-мĕш классенчен вĕренсе тухакансен Патшалăх аттестацийĕн положенийĕпе килĕшӳллĕн 9-мĕш класран вĕренсе тухакансем 4 экзаменран кая мар тата 5 экзаменран ытла мар тытаççĕ. Экзаменсен хисепне вĕрентӳ учрежденийĕсенче педагогсен канашлăвĕнче йышăнаççĕ.

2007 çулта Чăваш Республики 9-мĕш класра вĕренекенсем хушшинче патшалăх аттестацине çĕнĕ майпа иртерес эксперимента хутшăнчĕ. 2008 çулта вара 9-мĕш класра вĕренекенсен обязательнăй йĕркепе математикăпа тата вырăс чĕлхипе экзаменсем тытмалла. Унсăр пуçне чăваш чĕлхипе те çĕнĕ формăпа экзамен хушăнать. Малалла 10-мĕш класа биологи-хими тата физика-математика профиль класĕсене вĕренме кĕрес текенсен биологи тата физика предмечĕсемпе çĕнĕлле экзамен тытмалла пулать. Ытти предметсем пекех çак икĕ предметпа экзаменсене малтанхи майпа та тытма юрать.

Пирĕн районти 9-мĕш класра вĕренекен пур ача та экзаменсене Мăн Сĕнтĕрти тата Муркашри вăтам шкулĕсенче тытаççĕ. Экзаменри ĕçсене ЧР Вĕрентӳпе çамрăксен политикин министерстви çирĕплетнĕ территори экзамен комиссийĕсем тĕрĕслеççĕ. Çакă вĕрентĕве тĕрĕс хаклама пулăшĕ.

Енчен та ача çĕнĕлле майпа иртнĕ экзаменра «2» паллă илчĕ пулсан, вăл ăна тепĕр хут хăй вĕреннĕ шкулта кăшт каярах тытма пултарать. 9-мĕш класра вĕренсе тухакансем патшалăх аттестацине тытса мĕнле паллăсем илнине çирĕплетекен свидетельство алла илеççĕ. Унпа вĕсем пуçламăш професси тата ятарлă вăтам пĕлӳ паракан вĕрентӳ заведенийĕсене кĕме пултараççĕ.

Вĕрентӳ кăтартăвĕсем тăрăх ачан пĕр «2» паллă пулсан та обязательнăй йĕркепе экзамен тытма юрать. Çак лару-тăрăва вĕренекен лайăхлатма пултараймасть пулсан, ăна тăхăр класс вĕренни çинчен калакан справка параççĕ е иккĕмĕш çула хăвараççĕ. Унта вĕренесси вара тĕрлĕрен пулма пултарать: куçăмлă, куçăмлă тата куçăмсăр майсемпе е экстернат тата çемьери вĕрентӳ мелĕсемпе.

9-мĕш классенче алгебрăпа иртекен экзамен июнĕн 2-мĕшĕнче, вырăс чĕлхипе июнĕн 6-мĕшĕнче пулаççĕ.

11-мĕш класра вĕренекенсем тытакан пĕрлехи патшалăх экзаменĕсем пирки çакна каламалла. Вĕсен алла аттестат илме 5 экзаменран кая мар тата 6 экзаменран ытла мар тытмалла. Патшалăх экзаменне виçĕ предметпа памалла: вырăс чĕлхипе тата математикăпа пурин те, тепĕр экзаменне вĕренекен хăй суйласа илет. Пирĕн республикăра тата тепĕр вунă предметпа пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тытма юрать. Вĕсем: физика, хими, биологи, географи, Раççей историйĕ, обществознани, виçĕ ют чĕлхе, информатика тата информаци-коммуникаци технологийĕсем. Тепĕр майлă каласан, ача çак предметсенчен пĕрне суйласа илчĕ пулсан, вăл экзамена çĕнĕлле майпа тытма пултарать. Кăçалхи çул 11-мĕш класран тухакансен чăваш чĕлхипе çыру ĕçĕ (сочинени) те çырма тивет.

Физкультура, вырăс литератури, чăваш литератури тата пурнăç хăрушсăрлăхĕн никĕсĕсем (ОБЖ) предметсемпе экзаменсем йăлана кĕнĕ пекех иртеççĕ: билетсем тăрăх, реферат хӳтĕлесе е калаçу мелĕпе.

Çак вĕренӳ çулĕнчи пĕрлехи патшалăх экзаменĕсенче «2» паллă илсен вĕсене тепĕр хут тытма юрать, анчах та математикăпа вырăс чĕлхи предмечĕсемсĕр. Асăннă икĕ предметпа вĕренекен «2» илчĕ пулсан, вăл çак экзаменсене тепĕр çул çеç тытма пултарать. Аттестат çине вара «3» паллă каять. Патшалăх экзаменĕсенче вăл пĕр «2» паллăна тивĕçнĕ пулсан ăна тепре кăна резерв кунĕнче е йăлана кĕнĕ майпа пама пултарать. «2» паллă ку хисепрен ытларах пулсан, вĕренекене справка параççĕ, экзамен тытассине вара тепĕр çула хăвараççĕ. Экзаменсенче илнĕ «3» паллăна тӳрлетме юрамасть.

2008 çулта 11-мĕш класран вĕренсе тухакан ылтăн медаль илме тăрăшать пулсан, унăн патшалăх экзаменĕсенче пĕр «4» çеç пулма пултарать, кĕмĕл медаль илес текенсен - виçĕ «4». Çавăнпа пĕрлех «ылтăна» тивĕçекенсен 10-мĕш класри иккĕмĕш вĕренӳ çурçуллăхĕнче тата 11-мĕш класри икĕ çурçуллăхĕнче те «4» пулмалла мар.

11-мĕш класран вĕренсе тухакансем патшалăх экзаменĕсене тытнине çирĕплетекен свидетельство алла илеççĕ. Унпа вĕсем малалла тĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕсене кĕме пултараççĕ.

Майăн 16-мĕшĕнче ют чĕлхе, информатика тата информаци-коммуникаци технологийĕсем (ИКТ) предметсемпе ;

майăн 19-мĕшĕнче - хими тата обществознани предмечĕсемпе;

майăн 22-мĕшĕнче - Раççей историйĕ тата физика предмечĕсемпе;

майăн 26-мĕшĕнче - география, биологи тата литература предмечĕсемпе;

майăн 29-мĕшĕнче - вырăс чĕлхипе;

июнĕн 4-мĕшĕнче - математикăпа Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕсем иртеççĕ.

Хăйсенчен килмен сăлтавсене пула экзамен парайманнисем валли июнĕн 10 тата 11-мĕшĕсене уйăрнă.

Унсăр пуçне сывлăха çирĕплетекен учрежденисенче 4 уйăхран ытла тата санаторипе курортсенче сипленекен инвалид ачасем экзаменсене май уйăхĕн пуçламăшĕчех тытма пултарнине палăртса хунă. Вĕсен экзаменсене тытиччен сиплев учрежденийĕсенче пулнине çирĕплетекен справка, педагогсен канашлăвĕнче йышăннă ходатайство тата шкул ачи мĕнле вĕреннине кăтартакан хут (табель успеваемости) кирлĕ.

Н. НИКОЛАЕВА çырса илнĕ.

Милици хроникинчен

Хĕрарăмсен вăрçи

Кинсемпе хуньамăшсем хушшинче хутшăнусем тĕрлĕрен пулаççĕ. Пĕр-пĕринпе мĕнлерех пурăнасси иккĕшĕнчен те килет. Анчах пур чухне те килĕштерме май çук пулас.

Кĕртекассинче пĕр килте пурăнакан хĕрĕхе çывхарса пыракан кинĕпе 80-ран иртнĕ хуньамăшĕ пĕр-пĕринчен ывăнса çитнĕ. Кăшкăрашса вăрçăннипе çырлахман кинĕ, ватă хĕрарăма чышкăласа пĕтернĕ. 1925-мĕш çулта çуралнă карчăкăн, паллах, çапăçмашкăн вăй сахалрах пулнă. Çитменнине тата кинĕ хуньамăшне тимĕр куркапа та çапма ĕлкĕрнĕ.

Халĕ вара РФ УК 116-мĕш статйипе уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

Тӳлевсĕр эрех ĕçес тенĕ

Лавккана кĕсьере укçа пур чухне çеç кĕме çăмăл. Укçа çук чух чуна ыраттарма кĕнĕнех туйăнать. Уйрăмах самообслуживани енĕпе ĕçлекен лавккасене. Унта веçех куç умĕнче, тавара хăвна килĕшнĕ пек суйласа илме пулать.

Çапла Мăн Токшикри вăтăр урлă каçнă арçын Муркашри самообслуживани енĕпе ĕçлекен гастрономра «Вермут» эрехе суйлать. Лавккара çын нумайăшне курса вăл 1литрлă эрех кĕленчине укçа тӳлемесĕрех вăрттăн илсе тухать. 84 тенкĕ çурă тăракан эрехпе такамăн кăмăлне çавăрма шутланă ĕнтĕ çак «правур» арçын. Анчах вăрă ĕçĕшĕн вара ăна тӳрех ответ тыттарнă.

Пичете шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

Уяв

Садике чысларĕç

Нумаях пулмасть Москакассинчи «Колокольчик» ача сачĕ хăйĕн чĕрĕк ĕмĕрне чаплăн паллă турĕ.

Район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн ертӳçи Л. Мочалов пултаруллă садик ĕçченĕсене Хисеп грамотисемпе чысларĕ, ачасем валли парнесем пачĕ. Çавăн пекех парнесем районти культура пайĕнчен те, ял тăрăхĕнчен те, «Передовик» хуçалăхран та, Москакасси шкулĕнчен те, кӳршĕре пурăнакан садиксенчен тата ашшĕ-амăшĕсенчен те чылай пулчĕç. Çапла вара татах пуянланчĕ, илемленчĕ «Колокольчик» ача сачĕ.

Г. ГОЛУБЕВА.

Тав тăватпăр

Иртнĕ çул пирĕн пысăк инкек пулчĕ. Кил-çурт çунса кайрĕ. Çĕнĕрен ура çине тăма пире ялйыш, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем, тăвансем тата уйрăм предпринимательсем пулăшрĕç. Вĕсене çĕре çити пуç тайса тав сăмахĕ калатпăр.

Хорнуйĕнчи Гордеевсен çемйи.

Куплю старинные монеты с чувашского национального костюма. Тел.: 8-902-300-39-08. 1-2.

Халăхран лайăх хакпа ĕне, вăкăр, тына ашăн тата чĕрĕ висепе туянатпăр. Тел.: 8-905-343-60-63, 60-7-10. 3-4.

СХПК им. Ленина реализует поросят молочных и подращенных, живым весом по цене 100–80 руб. за 1 кг. Тел.: 2-14-11, 2-14-21.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Пластиковые ОКНА ДВЕРИ ВИТРАЖИ
Из немецкого профиля ARтес
Тел.: 8 927 667 68 35
37 68 35
ЕВРО ДОМ

КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения, выдает займы. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 12-20.

Мир окон и дверей
29-80-60
ОКНА пластиковые
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
от ведущего производителя
Чувашии теперь...
в МОРГАУШАХ
Здание "СЕЛЬХОЗТЕХНИКА", 2эт
8-927-669-80-60
Весь апрель - скидка 20%

Куплю: старые перины, подушки, свежее пух-перо, б/у аккумуляторы. Тел.: 8-927-859-90-82, 8-927-859-90-98. 2-2.

ЗАО МСО «Моргаушская» реализует цемент по цене 280 руб. за 1 мешок. Предлагает квартиры в новостроящемся многоквартирном жилом доме в д. Москакасы Моргаушского района по цене 20500 руб. за 1 кв. м. общей площади квартир.
Обращаться по адресу: Моргаушский район, д. Юнгапоси, ул. Ягодная, д. 21. Тел.: 32-2-23; 2-21-29. 1-2.

Продаются пчелосемьи. Адрес: с. Б-Сундырь, тел.: 52-4-37 или 8-908-840-16-27. 1-2.

Продаю кур-молодок с доставкой. Тел.: 8-903-359-42-98.

Утă, ВАЗ-2101-3 автомашина сутатăп. Тел.: 8-960-308-48-15; 2-16-59.

14 апреля в ДК с. Моргауши с 11 до 16 часов Кировская ярмарка предлагает: демисезонную обувь, постельное белье (г. Иваново). Все по 400 рублей.

Предприятию для работы в Чувашской Республике требуются машинисты автогрейдера, катка, экскаватора; бульдозеристы. Зарплата от 18 тыс. рублей. Тел.: (8352)69-43-85. 5-8.

В магазине «ВАСИЛЕК» новое поступление товаров:
ЖК-телевизоры - от 23 тыс. руб + в подарок сотовый телефон или DVD-плеер.
Телевизоры - от 2500 рублей.
Стиральные машины (автомат) - от 8000 рублей.
Сотовые телефоны - от 1000 рублей.
DVD-плееры - от 1000 рублей.
Пылесосы - от 1000 рублей.
Домашние кинотеатры - от 4000 рублей.
Автомагнитолы (MP3) - от 2000 рублей.
А так же СВЧ-печи, швейные машины, мясорубки, аксессуары к сотовым телефонам и многое другое.
КРЕДИТ на месте!
Подключение на все операторы связи!
При покупке сотового телефона + подарок (бесплатное подключение).
Магазин находится на территории рынка. Телефон: 2-11-66.

Продаю кирпич: силикатный, красный одинарный М-150, М-125, красный полуторный пустотный М-125, КББ, керамзит, гравмассу, красный половняк. Тел.: 8-903-358-20-97, 44-20-97. 9-13.

ИП Баранов Э.И. продает строительные материалы: доски хвойные обрезные 6-метровые 50х120, 50х150, 50х200; брусья 100х100, 100х150, 150х150, цемент, шифер, рубероид 15 м. Обращаться в «Моргаушагропромснаб» или по тел.: 8-903-346-40-58. 4-6.

СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ
8-927-666-93-95
от 3500 рублей 5-7.
Предъявителю визитки объявления - скидка.

Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ тата профсоюз райкомĕ Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра нумай çул ĕçленĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ

Валерий Никодимович ОСИПОВ

сарăмсăр вилсе кайнă пирки çемйипе, тăванĕсемпе, тустантăшĕсемпе тата пĕрле ĕçленисемпе чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 11.04.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3637.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.